Выльăх-чĕрлĕх отраслĕ çур çулта

Тĕллевсене пĕлсе ĕçлеççĕ

Иртнĕ эрне кун, июлĕн 24-мĕшĕнче, районти выльăх-чĕрлĕх пăхакансем кăçалхи çур çулхи ĕççене тишкерсе ума лартнă тĕллевсем епле пурнăçланнине пăхса тухрĕç. Çак канашлу обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсем çĕннине вăй пама хатĕрри пирки каланăнах туйăнчĕ.

– Патшалăх çĕр ĕçченне пăрахмасть. Вăл паян ĕçлекене май пур таран пулăшать. Çак пулăшу пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем, килти хушма хуçалăхсем çине те пĕр пек валеçĕнет. Çакă конкурентлăха ӳстерчĕ. Ку вара малашлăха ярса пуснă черетлĕ утăм пулчĕ. Çĕнĕлĕхсен тыткăнĕнче пирĕн паян сĕт сăвассипе тата аш-какай туса илессипе те алă усма юрамасть. Ĕçлесен ӳсĕмсем те пулаçсех. Çак ырă ене эсир паян «Герой» хуçалăхра курса ĕненме пултаратăр. Кунти ĕççенче çĕнĕ технологие алăк уçнин тĕрĕслĕхĕ курăнать. Кам çĕннипе туслă – унăн кăтартăвĕсем те пысăк, – терĕ канашлăва уçса район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов.

Шурчасем çĕнĕлĕхсемпе тачă çыхăнура пулсан, çак мал туртăмлăх пур çĕрте те мар-ха. Çапла вара кăçалхи 1-мĕш çур çулта аш-какай туса илесси районĕпе 9,2 процент пĕчĕкленнĕ, сĕт сăвасси 1,2 процент ӳснĕ. Килти хушма хуçалăхсенче вара çак кăтартусем 62 тата 88 процент. Кунпа пĕрлех выльăхсен йышĕ чакни те кашнинех шухăшлаттармалла. Çаксенчен йĕркеленет те ĕнтĕ выльăх-чĕрлĕх пăхакансен тĕллевĕ. Малтанах паха апат хатĕрлесе тата апатлантарăва çĕнĕ технологи çине куçарса выльăхсен ӳт хушаслăхне пысăклатмалла, сĕт сăвассине ӳстермелле, кĕтĕве çĕнетессипе ĕçлемелле, çамрăк выльăхсемпе ĕçлесси çине тимлĕх уйăрмалла.

– Пĕрремш çур çул иртсе кайрĕ. Çак вăхăтра пĕтĕмĕшле сĕт сăвасси пĕлтĕрхинчен 679 тонна сахалрах пулсан та, пĕр ĕне пуçне сĕт сăвасси 120 кг ӳсрĕ. Çакă пирĕн ĕçлеме майсем пуррине кăтартать. Акă «Герой» хуçалăхра çак тапхăрти вăтам сăвăм 2936 кг пулчĕ. Районĕпе – 2117 кг. Сĕт сăвасси Суворов яч. хис., «Передовик», Ильич яч. хис., «Ударник» хуçалăхсенче те пысăк. Технологи дисциплинине пăхăнсан вĕсенчен кая юлмасăр ĕçлеме ыттисен те майсем пур, – терĕ хăйĕн докладĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ тата ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. Ананьев чылай çĕнĕлĕхе «Герой» хуçалăхран алла илме май пуррине палăртса.

Кăçалхи 6 уйăхра пысăк продуктивлăхлă выльăхсене тытса тăма районти хуçалăхсем пурĕ 8100 пин тенкĕ патшалăх пулăшăвĕпе усă курнă.

Сысна тата мăйракаллă шултра выльăхсен какайне туса илнин эффективлăхĕ пирки калас пулсан, куç умне çакнашкал ӳкерчĕк тухать. Сысна какайне реализацилесе район пĕрремĕш çур çулта 2165,8 пин тенкĕлĕх (пĕлтĕр – 148 пин тенкĕ) тупăш илнĕ. Пĕлтĕрхи 0,5 процент рентабеллĕх кăçал 11,3 процента çитнĕ. Мăйракаллă шултра выльăх какайĕ вара нумайăшне тупăш парайман. Районĕпе вăл 1053,5 пин тенкĕ тăкака кайса ларнă.

Ӳсĕм тумалли сăлтав – вырăнта йĕрке пулни, руководительпе зооветспециалистсем, заведующисемпе выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсем пĕр чĕлхе тупса кал-кал ĕçлени. Çавăнпа та ĕнтĕ äçта йĕрке пур, специалистсем вырăнта, унта ӳсĕмсем те куç умĕнче.

2009 çулта патшалăх пулăшăвĕпе анлăн усă курса, районти выльăх-чĕрлĕх пăхакансем çĕнĕ çитĕнӳсем тăвасса, палăртнă тĕллевсене пурнăçласса шанас килет.

А. БЕЛОВ.

Сăн ӳкерчĕксенче: «Герой» хуçалăх ертӳçи Р. Тимофеев канашлăва пынисене хăйсен ĕçĕпе паллаштарать; ашшĕпе ывăлĕ Валерийпе Михаил Иванов механизаторсем «Герой» хуçалăхра выльăх апачĕ хатĕрлессипе тăрăшса ĕçлеççĕ. Çакна вĕсемпе пĕрле сенаж çинче ĕçлекен М.Степанова та çирĕплетрĕ.

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

Çамрăксен çулталăкĕ

Парашютистсем палăрчĕç

Муркаш районĕ спортра нихăçан та кайрисен ретĕнче пулман. Йĕлтĕрпе чупассипе, çăмăл атлетикăра нумай чух пирĕннисене çитекен тупăнман. Анчах пурнăç пĕр вырăнта тăмасть. Иртнĕ çул ЧР Президенчĕ пулăшнипе Муркашра та «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ хута кайни пирĕн яшкĕрĕме ытти спорт тĕсĕсенче те палăрма пулăшрĕ. Манăн паянхи сăмах – парашют спорчĕ пирки.

Муркаши вăтам шкулта йĕркеленнĕ «Родина» çарпа патриотизм клубне çӳрекенсем юлашки вăхăтра парашют спортне алла илессипе нумай заняти ирттереççĕ. Çак клуба çӳрекен С. Куликов, К. Васильев, А. Авдеев, Д. Кузнецов, Р. Григорьев тата Мăн Сĕнтĕр шкулĕнчи И. Семенов ертсе пыракан М. Шуйцев ячĕллĕ çарпа патриотизм клубĕн членĕ Е. Спиридонова «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕн директорĕ А. Куликов капитан пулса ертсе пынипе июлĕн 18-мĕшĕнче Шупашкарта çарпа патриотизм клубĕсем хушшинче иртнĕ парашют спорчĕн ăмăртăвне хутшăнчĕç. Физкультурăпа спорт комплексĕн пулăшăвĕпе сывлăха çирĕплетнĕ ачасем çăмăллăнах пĕрремĕш вырăн çĕнсе илчĕç. Çак çитĕнӳ пире çĕнĕ тĕллевсем йышăнма ыйтать.

В. ЛЬВОВ,
«Родина» çарпа патриотика клубĕн ертӳçи.

Районăн паллă çыннисем

Çынна вăхăтра пулăшни – телей

(Малалли. Пуçл. иртнĕ номерте).

Иртни ума тухрĕ. Ир енне ăсату каçĕ ирттерекен çĕртен васкавлă пулăшу машинипе кĕлетки пачах ĕçлемен яша больницăна илсе килчĕç. Куракансем каланă тăрăх, яшăн çурăм шăмми куçнă, тĕп нерва хĕссе лартнă. Çамрăка пулăшмалли вăхăт – çеккунтсем. Шăмă куçнине майлаштарса çамрăка вырăн çине ятарлă мелпе туртăнтарса хурсан, паян алла аттестат илнĕ яш куççуль витĕр шăл çыртса йĕни паян та куç умĕнче. «Тухтăр, нивушлĕ эпĕ офицер пулаймастăп? Пулăшă-ăр!» – тесе йĕчĕ вăл çав самантра. Çак ĕмĕт пурнăçа кĕрессе кам шутланă-ши ун чух? Паллах, никам та. Урасăр Мересьев самолетпа вĕçме пуçланă пекех-çке ку! Анчах тухтăрсем хăйсен ĕçне пĕлни тата çын пурнăçа юратни тĕлĕнтермĕшсем тăвать. Ятарлă вырăн çинче выртакан çамрăкăн уйăхран алăурасем выляма пуçлани сывлăх хуралçисене шанчăк пачĕ-ха, анчах...

Юсану çулĕ çине тăнă Коля хăйĕн ачалăхри шухăшне пăрахмарех. Сывлăха çирĕплетсе пырса çулталăк иртсен каллех Рязаньти сывлăш десанчĕсен çар училищине вĕренме кĕме заявлени пачĕ. Тĕрĕссине каламасăр медицина тĕрĕслевĕ витĕр тухрĕ. Экзаменсене ăнăçлă тытса çар училищин курсанчĕ пулса тăчĕ. Коля унтанпа çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче сахал мар çар операцийĕсенче пулчĕ, анчах хăйне ывăр вăхăтра пулăшнă Леонид Николаевич пирки пĕрре те манмарĕ.

– Сана ура çине тăратас ĕçре пĕр эпĕ çеç тимленĕ теес килмест. Хирурги уйрăмĕнчи кашни врачăн тимлĕхĕ унта: Г. Огурцов, В. Данилов, С. Васильев, И. Воробьев т. ыт. те. Пурин те пĕр шухăш пирĕн: çителĕклĕ таран пулăшмалла, – паянхи куна тавраннчĕ хирург-травматолог халĕ хăйĕн ĕçне малалла тăсакан А. Афанасьев ĕçтешĕ пирки тата реанимаци уйрăмĕнче ĕçлекенсем çинчен ырăпа асăнса.

Леонид Николаевич Шупашкар районĕнчи Платка ялĕнче 5 ачаллă çемьере çуралса ӳснĕ. Ашшĕ – Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен аманса таврăннă вăрманçă, амăшĕ – пуçламăш классене вĕрентекен. Ашшĕне тăтăшах медицина пулăшăвĕ кирлĕ пулнăран Леньăн аслă пиччĕшĕ Володя медицина училищине вĕренме кĕчĕ. Ăна культурăпа архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçинче вăй хуракан чăваш хĕрарăмĕн мăшăрĕпе юнашар унăн ĕçне ăнланса пулăшса пыма тăрăшни кашни сăмахрах сиснĕ.

Вăлах йывăр вăхăтра ашшĕне мĕнле пулăшу памаллине вĕрентрĕ. Çапла вара 9 класра вĕреннĕ чух пĕррехинче шкултан тавраннă Леня ашшĕ пулăшу кĕтсе выртнине асăрхать. Пиччĕшĕ вĕрентнĕ пек укол тăвать те вырăн çине илсе хурать. Килте никам та çук. Çак самантра тĕвĕленчĕ те ĕнтĕ шкулта япăх вĕренмен яш чĕринче тухтăр пулас шухăш. Ашшĕ тӳссе ирттернĕ йывăрлăхсемех Леонидăн шăллĕне Юрие те пиччĕшĕ пекех Чăваш патшалăх университечĕн медицина факультетне илсе çитерчĕ, çапла вара Андреевсен медицинăри çемье династийĕ йĕркеленчĕ. Л. Андреев 1971-1977 çулсенче университетра тивĕçлĕ пĕлӳ илнĕ чухнех травматолог ĕçне суйласа илет, çак енпе пĕлĕве ӳстерес çул çине тăрать.

– Диплом илсен травматолог валли республикăра икĕ вырăнччĕ: пĕри – Çĕнĕ Шупашкарта, тепри – Муркашра. Эпĕ хам халиччен пулса курман Муркаша суйласа илтĕм. Çапла вара 1977 çултанпа Муркашра тĕпленме пуçларăм. Куç умĕнчех район больници çĕнелсе вăй илсе пычĕ, хăйĕн ят-сумне район тулашне те кăларчĕ, – сăпайлă каласать Леонид Николаевич мăшăрĕ Алевтина Евстафьевна çине кăмăллăн пăхса.

Паян район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕнче – Хирург-травматолог ĕçĕ çăмăл маррине пурнăç тăршшĕпех куратăп ĕнтĕ. Мăшăр талăкĕпех больницăра пулни, ăна çур çĕр варринче те ĕçе чĕнни, чирлĕ çынсемшĕн вăл мĕнле кулянни йăлтах куç умĕнче. Çавăнпа та ĕç тĕлĕшпе эпĕ ăна яланах хавхалантарма, пулăшма тăрăшнă. Çын сывлăхĕ хаклăрах-çке. Çынна вăхăтра пулăшни – телей, – шăкăл-шăкăл каласать манăн пĕлĕшĕмпе, хăйĕн мăшăрĕпе 1979 çулта Шупашкарта çамрăксен каçĕнче паллашнă, хыççăн çемье çавăрнă А. Андреева. Вĕсен икĕ ача. Иккĕшĕ те аслă пĕлӳ илсе пурнăç çулĕ çине тухнă.

– Çынна ырă тума васка. Ырă туни ырăпах таврăнать, – тетчĕ пурнăç тути-масине курнă анне. – Унăн ырă сăмахĕсене асра тытса ĕçлеме тăрăшрăм та ĕнтĕ. Манăн ĕçтешсене те амăшĕсем çавнах каланă пулас. Пурте пĕр ĕмĕтлĕ ĕçлетпĕр, – кăмăллăн каласать Леонид Николаевич.

Отпускăн юлашки кунĕнче хăйĕн патне кĕнĕ офицера ăсатса ярсан йывăр суранпа килнисене кашнинех аса илме тăрăшрĕ травматолог, вĕсен йышĕ ытлах та пысăк. Кашнинех асра хăварма çук. Çак шухăшсемпе Леонид Николаевич ĕнер килнĕ йывăр суранлă çын выртакан палатăна васкарĕ.

А. БЕЛОВ.

Техникăпа усă куракансене пĕлме

«Трактор» уйăхлăх пуçланать

Çĕр ĕçченĕшĕн чи хĕрӳ ĕç çи тапхăрĕ пырать: уяр кунсемпе усă курса кая юлмасăр выльăх апачĕ çителĕклĕ янтăламалла, вырма кантăкран шаккать – ăна тивĕçлипе хатĕрленсе çухатусемсĕр ирттермелле, кĕр аки çывхарать – ун пирки шутламалла. Çак вăхăтра, паллах, тракторсемпе вĕсен прицепĕсемĕр, хăй тĕллĕн çӳрекен ытти техникăсăр ĕççене агротехника ыйтнă пек пахалăхпа вăхăтра пурнăçлама çук. Анчах çакна курса-пĕлсе тăраканăн ку вăхăтра асăрханулăх пирки самантлăха та манма юрамасть. Ĕççене халăх йышлă хутшăннă тапхăрта çакă уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Кăна шута илсе республикăра çулленех август уйăхĕнче «Трактор» профилактика уйăхлăх-операци ирттересси йăлара. Умра акă кăçал та çав вăхăт. Çак кунсенче Чăваш Республикинчи хăй тĕллĕн çӳрекен тата ытти техникăна пăхса тăракан патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕпе В. Димитриевпа Чăваш Республикин шалти ĕççен министрĕ В. Антонов аван уйăхĕн 1-мĕшĕнчен «Трактор» уйăхлăх-операци ирттересси пирки приказ кăларчĕç. Асăннă тапхăрта патшалăх техника надзор инспекцийĕн ĕçченĕсем çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕпе пĕрле çынсен тата предприятиорганизацисен харпăрлăхĕнче усă куракан тракторсемпе прицепсем тата хăй тĕллĕн çӳрекен ытти техника тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕрех пулĕç. Тĕрĕслевсем вăхăтĕнче техникăна техосмотр тăратнине пăхасси, юсавсăр тата учета тăратман техникăпа ĕçе тухнине палăртасси, питех те кивелнĕ техникăна учетран кăларасси, тракторсен хуçисем пушар хăрушсăрлăх правилисене епле пăхăннине тĕрĕслесси малти вырăнта пулĕ.

Иртнĕ çулхи «Трактор» уйăхлăхра республикăра 5328 техника единицине тĕрĕсленĕ. Вĕсенчен 133-шĕ регистраци правилисене пăсса эксплуатациленнĕ, техосмотр правилисене пăхăнманнисем 298 машина пулнă, 142 тĕслĕхре трактор рулĕ умне тракторист-машинист удостоверенийĕсемсĕр ларнă, 184 машинăн регистраци документĕсем пулман, 264 техника единици çул-йĕр хăрушсăрлăхпа пăсакан юсавсăрлăхпа ĕçе тухни палăрнă.

С. НИКОЛАЕВ,
патшалăх техника надзорĕн районти аслă инспекторĕ.